Спорт

# Чечен çĕрĕ çинче пуç хунисене асăнса

Апрелĕн 24-мĕшĕнче Чуманкассинчи вăтам шкула 12-мĕш хут ĕнтĕ районти тĕрлĕ шкул командисем Чечен вăрçинче пуç хунă Л. Семеновпа А. Димитриева асăнса ирттерекен ăмăртăва пуçтарăнчĕç.

Çак кун районта ытти тĕрлĕ ăмăртусем пулнăран-ши, ăмăртăва пурĕ те 5 команда çеç хутшăнчĕ: кил хуçисемсĕр пуçне старта Калайкассинчи, Ярапайкассинчи, Йӳçкассинчи вăтам, Тойкилтĕри тĕп шкулсенче вĕренекенсем тухрĕç. Вĕсене пурне те район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ З.Ю. Дипломатова тата вырăнти ытти ертӳçĕсем саламласа ăнăçусем сунчĕç. Ăмăртăва пуçтарăннисем пуç хунă яшсене пĕр минут шăплăхпа асăнчĕç. Анатолий Димитриевăн ашшĕ те спортсменсене старт умĕн çитĕнӳсем тума хавхалантарса сăмах каларĕ.

Сивĕ çил никама та пĕр вырăнта нумайччен тăма памарĕ: спортсменсем тăрăшсах старта хатĕрленчĕç, куракансем те активлăхпа палăрчĕç. Йăлана кĕнĕ тăрăх старта хăвăрт утассипе ăмăртакансем пуçларĕç. Вĕсем хушшинче (тĕрлĕ ӳсĕмсенче) çĕнтерӳçĕсем çаксем пулчĕç: А. Емельяновăпа Г. Иванов (Тойкилтĕ шкулĕ), Д. Замятина (Калайкасси) тата Р. Емельянов (Чуманкасси).

Чупас енĕпе ăмăртакансем старта йышлăраххăн тухни тĕлĕнтермерĕ. Хăвăрт утассин техники йывăр пулнине ку ăмăртăва кашни çулах сăнама пуçтарăнакансем те ăнланса илнĕ ĕнтĕ. Паллах, кашниех малти вырăна тухасшăн тăрăшрĕ. Çĕнтерӳçĕ ятне вара вăйлисем çеç тивĕçеççĕ çав. Чупассипе мала çаксем тухрĕç: Н. Порфирьева (Тойкилтĕ), Н. Николаев, Д. Баранова (Калайкасси), Д. Милютин (Тойкилтĕ), Т. Иванова тата А. Моисеев (Калайкасси).

Ăмăртура мала тухакансене пурне те Чуманкасси шкул администрацийĕ асăнмалăх парнесемпе грамотăсем парса саламларĕ. Ăмăртăва хутшăннă чи çамрăк спортсменсене те парнесемсĕр хăвармарĕç. Парнесем тенĕрен вара, кăçалхи ăмăртăва ирттерме Эльвира Кадыкова уйрăм предприниматель пысăк пулăшу панă. Ăна тав сăмахĕ каласа ырăпа асăнчĕç ăмăртăва йĕркелекенсем. Вăл кӳрсе килнĕ хаклă та усăллă парнесем çĕнтерӳçĕсене килĕшни тӳрех палăрчĕ, ыттисене вара малашне çитĕнӳсем тума хавхалантарчĕ.

# Муркашсем айсшток енĕпе те маттур

Иртнĕ шăмат кун Çĕнĕ Шупашкар хулинче айсшток енĕпе республика ăмăртăвĕ иртнĕ. Айсшток – спортăн çĕнĕ тĕсĕ (керлинг майлăрах), çавăнпа та кирлĕ инвентарьпе хальлĕхе республикăри айсшток федерацийĕ тивĕçтернĕ. Çак вăййа пăр çинче кăна мар, асфальт çинче те ирттерме пулать. Тренировкăсене нумайăшĕ уçă сывлăшра асфальт çинче ирттерет те. Вăйăра пĕр ушкăнра ĕçлеме хăнăхасси, хусканусен тĕрĕслĕхне, куç виçин тăрĕслĕхне аталантарасси пуç ватнипе те çыхăннă.

Республикăри айсшток федерацийĕн президенчĕ О.К. Степанов (вăл «Термотехника» компанисен ушкăнĕн тĕп директорĕ) айсштока республикăри кашни районах çитерме шутлани пурнăçланать темелле. «Сокол» пăр керменне республикăри виççĕмĕш ăмăртăва Муркашри лицей команди те хутшăннă. Спортăн çĕнĕ тĕсне алла илме лицейра вĕренекенсене Ю. А. Ершов учитель пулăшнă, икĕ команда пухса ачасене ăмăртăва илсе тухнă. Алексей Михайлов, Алексей Петров, Денис Алексеев, Ярослав Соколов – çак маттур яшсем хăйсен мĕн пур ăсталăхне кăтартса виççĕмĕш вырăн çĕнсе илме пултарнă. Тепĕр команди те япăх мар ăмăртнă. Малашне те вĕсене çитĕнӳсем тума сунатпăр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Суд залĕнчен

# Тӳрленӳ çулĕ пурри шанăç пулмалла

**Саккунлăха пăхăнасси граждансене, хăйсен хуçалăхне тытса пырассипе е ертсе пырассипе ĕçлекен организацисемпе учрежденисене çеç мар, йĕркелĕхпе суд тĕрĕслĕхне тытса тăракан органсене те пырса тивет.**

Уголовлă ĕçсене тишкернĕ чухне саккунлăха пăхăнасси Раççей Федерацийĕн Уголовлă кодексĕн 3 статйин 1 пайĕпе килĕшӳллĕн пулса пырать. Преступленисене тишкерессиi, айăпласа наказание палăртасси Уголовлă кодекспа кăна çирĕпленет. Анчах та уголовлă ĕçсене тишкернĕ чух саккунлăх çиелте пулать пулин те, айăпланă çынна наказани çирĕплетсе панă чухне те Уголовлă кодекс çыннăн характерне, преступленин обществăлла хăрушлăхĕ епле пулнине тата ытти хăш-пĕр лару-тăрăва шута илме ыйтать.

Условлă майпа айăпланă тенине пурте илтнĕ-тĕр. Çакнашкаллисен яланах икĕ çул: панă ирĕклĕхе упрасси, тӳрленесси е суд йышăнăвне шута хумасăр йĕплĕ пралук леш енне лекесси.

Суд преступлени тунă çынна условлă майпа айăпларĕ пулсан, маларах асăннă сăлтавсене шута хурса çак çын ирĕкрех тӳрленме пултарассине курса тăрать. Условлă майпа айăпланисене тĕрĕслев срокĕ параççĕ. Çак вăхăтра айăпланă çыннăн тӳрленмелле те. Çапла майпа айăпласа çынна суд пурăнакан вырăна, ĕç вырăнне е вĕренӳ вырăнне ятарлă органсемпе килĕшсе татăлмасăр улăштарма юраманнине, эрех-сăра сутакан тата ĕçме ирĕк паракан заведенисене çӳреме юраманнине тата ытти ирĕксĕрлĕхсене çирĕплетме пултарать. Çакна ĕç тăвакан уголовлă инспекци тĕрĕслесе тăрать.

Тĕрĕслев срокĕ вĕçленичченех айăпланă çын хăй тӳрленнине суда тивĕçлипех кăтартса пачĕ пулсан, ĕç тăвакан уголовлă инспекци материалĕсем тăрăх Уголовлă кодексăн 74 статйин 1 пайĕпе килĕшӳллĕн, суд условлă майпа айăпланине те пăрахăçлама пултарать, анчах та тĕрĕслев срокĕ çурри урлă каçнă пулсан.

Çак медалĕн тепĕр енĕ те пур. Уголовлă кодексăн 74 статйин 2 тата 3 пайĕсенче çирĕплетнипе условлă майпа айăпланă çын тĕрĕслев срокĕ вăхăтĕнче йĕркене пĕрре мар пăсрĕ пулсан е тата çак срок вăхăтĕнче пĕрпĕр пысăк мар йывăрлăхлă преступлени турĕ пулсан, суд условлă майпа айăпланине ирĕкрен хăтарассипе те улăштарма пултарать. Акă кăçалхи пĕрремĕш кварталта районта условлă майпа айăпланисенчен 10-шне учетран кăларнă, 33-шĕ тĕлĕшпе тĕрĕслев срокĕсене тăсма тивнĕ, 4-шĕн айăплавне суд улăштарнă.

Тĕслĕхсем илсе кăтартарха. 2009 çулхи июлĕн 23-мĕшĕнче Муркаш район сучĕ А. гражданина РФ УК 30 статйипе, 158 статйин 3 пайĕн «а» пункчĕпе тата 2 пайĕпе килĕшӳллĕн условлă майпа 2 çуллăх ирĕкрен хăтарма тĕрĕслев срокне 1 çул тесе çирĕплетрĕ. А. гражданин тӳрленсе пынине çирĕплетсе ĕç тăвакан уголовлă инспекци кăçал март уйăхĕнче ходатайство тăратрĕ. Ăна тишкерсе тухса суд çак çын çинчен айăплава илме çирĕплетсе йышăну кăларчĕ.

Хирĕçле материалсем те пур. Кăçалхи март уйăхĕнчех ĕç тăвакан инспекци ыйтнипе суд Д. гражданин тĕлĕшпе тĕрĕслев срокне тепĕр уйăха тăсма йышăнчĕ. Йĕркене пĕрре мар пăснипе çыхăннă çакă. Д. гражданина условлă майпа айăпланине улăштарма пултарасси пирки çырса та пĕлтернĕ, лешĕ вара нимĕн те шута хуман. Обществăлла вырăнсенче ӳсĕр пулнипе те палăрма ĕлкĕрнĕ вăл. Куншăн ăна административлă майпа айăпланă. Çапла Д. гражданин тĕрĕслев срокне тăснă хыççăн та йĕркене пăснипе хăйне валли тепĕр ирĕклĕхе чакарассине ĕçлесе илнĕ: унăн эрех-сăрана сутакан тата унтах ĕçме ирĕк паракан заведенисенче пулма юрамасть.

Тĕпĕр условлă майпа айăпланнă çын тĕлĕшпе ĕç тăвакан уголовлă инспекци суда ăна ирĕкрен хăтарма йытса çырчĕ. М. гражданина тĕрĕслев срокĕ вăхăтĕнче темиçе хут çырса асăрхаттарусем панă, официаллă асăрхаттару та пĕрре кăна пулман унăн, çак тапхăрта административлă йĕркене те пăснă вăл. Хăйне валли тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳсем туман. Çапла вара суд условлă майпа айăпланине 1 çуллăх ирĕкрен хăтарассипе улăштарса ăна пĕтĕмĕшле режим колонине яма çирĕплетрĕ.

Юлашкинчен çакна каласа хăварас килет. Условлă майпа айăпласа тĕрĕслев срокĕ пани айăпланнисемшĕн тӳрленӳ çулĕ çине тăмалли тепĕр шанăç пулнине манмалла мар.

**С. ТРИХАЛКИН,**
**Чăваш Республикин Муркаш район сучĕн судийи.**

Редакци почтинчен

# «Кĕрен парăс» хăнисем – Калайкасси артисчĕсем

Апрелĕн 25-мĕшĕнче пирĕн аслă вĕрентекенĕмĕр, чăваш халăхне çутта кăларма пулăшнă аслăран та аслă ăсчахăмăр И.Я. Яковлев çуралнă кунĕ пулчĕ. Ăна халалласа «Кĕрен парăс» республикăри ача-пăча санаторийĕнче те чăваш чĕлхи уявне ирттертĕмĕр. Уява хатĕрленсе чăваш юррисене юрларăмăр, «Нарспи» поэмăн сыпăкĕсене пăхмасăр каларăмăр.

Уявра карталанса вăйăсем те выляrăмăр. Хусан хулинчен И.Я. Яковлев «килсе çитрĕ». Унăн рольне «Амăшĕ тата ачи» путевкăпа сипленекен Эдуард Владимирович Николаев питĕ ĕненмелле вылярĕ. Ачасем Иван Яковлевича яланах таса чун-чĕреллĕ, чăваш чĕлхине юратма, упрама шантарса тупа турĕç. «Кĕрен парăсра» çак кун хăнисем те пултаруллисемех пулчĕç. Калайкассинчи Культура çурчĕ çумĕнчи ушкăн юрă хыççăн юрă шăрантарчĕ. Санаторинче сипленекенсемпе ĕçлекенсем те кăмăллă юлчĕç. Артистсене вара Тав хучĕ парсах чысларĕç.

**Т. ПОЛЯКОВА, «Кĕрен парăс» воспитателĕ.**


# ИНТЕРНЕТ БЕЗ ПРОВОДОВ




Несколько лет назад мы и представить себе не могли, что компьютеры будут не только в госучреждениях, но и в каждой школе республики. А про интернет в каждом доме оставалось только мечтать. Сейчас высокие технологии сделали эти мечты реальностью. Интернет очень быстро превратился из технической диковинки в средство для общения и удобный рабочий инструмент. Узнать новости, отправить письмо, передать привет знакомому – насколько проще и быстрее сделать это через всемирную паутину! Правда, далеко не везде есть возможность подключиться к интернету посредством проводной связи. Провайдерам, то есть фирмам, которые предоставляют такие услуги, бывает просто невыгодно тянуть кабель в районы малоэтажной застройки или на село.

Не так давно это было почти непреодолимым препятствием для жителей райцентров, желающих приобщиться к интернету. Но сегодня отсутствие проводов уже не проблема. Наоборот, это становится преимуществом. Зачем привязывать себя к розетке, если можно получить доступ к Интернет-ресурсам где угодно – на улице, в гостях, в дороге?

По настоящему беспроводной Интернет нынче доступен любому абоненту МегаФона – для этого достаточно мегафоновской симки в вашем сотовом телефоне. А домашний компьютер или ноутбук можно подключить к сети с помощью модема, который продается в салонах связи. Новая модель E1750G дает возможность увеличить скорость передачи данных до 7 Мб/с. Подключив услугу **«Интернет-регион»**, можно без ограничений в трафике пользоваться возможностями Всемирной паутины, причем абонентская плата устанавливается в зависимости от тарифа и составляет 100 рублей на ТПО «МегаФон-Модем», «МегаФон-Модем Плюс», «МегаФон-Модем Плюс Комплект», или 250 рублей на тарифах «Регион», «Моя Республика», «Интернет без забот», «МегаФон-Логин» . Подключить услугу можно самостоятельно, отправив USSD-запрос на номер *105*05# или *105*673#, с помощью SMS на номер 000673, через программу самообслуживания «Сервис-Гид» или обратившись в фирменный салон «МегаФон».

Чтобы беспроводной Интернет стал доступен каждому абоненту в любом населенном пункте республики, МегаФон предлагает удобный способ приобретения: позвоните по телефону Горячей линии 37 40 03, и **модем от МегаФона всего за 840 рублей** вам доставят прямо на дом.

Первый общероссийский оператор сотовой связи пришел в республику всего пять лет назад, но за это время успел построить и запустить на ее территории более двухсот пятидесяти базовых станций. Поэтому везде, где присутствует МегаФон, можно без труда выйти в Интернет. Это не случайность, а закономерный результат политики компании – быть там, где живут ее абоненты.

Вот и в Чувашии МегаФон активно продвигает свои услуги не только в городах, но и в районных центрах. И везде доступна не только качественная голосовая связь, но и мобильный Интернет. А чтобы уровень сервиса и в столице, и в районах был одинаковым, практически в каждом районе работают Фирменные салоны «МегаФон». Специалисты в салонах расскажут о преимуществах сети, помогут подобрать тарифный план и настроят нужные именно вам услуги.

МегаФон предлагает общение вне притяжения!

Лицензия №58056 от 18.04.2000г.


## Пĕлтерӳсем. Объявления


**«ОАО «Чувашсетьгаз» объявляет конкурс по выбору подрядной организации для осуществления капитального ремонта газорегуляторных пунктов в количестве 10 шт., находящихся в Ядринском и Моргаушском районах. Проектно-сметная документация имеется.**

**Для участия в конкурсе необходимо предоставить документы согласно действующему законодательству.**

**Справки по телефону: 51-19-23, телефоны филиала «Моргаушимежрайгаз»: 8(835 41) 60-2-27,8(835 41)60-2-25.**

выдаем на выгодных условиях
ЗАЙМЫ
работаем с пайщиками
с.Моргауши, ул.Чапаева, 44а/2
6-23-10, 8 927 667-48-92
выгодные % ставки
КПКГ “КАПИТАЛ”
Св-во гос.рек. 21 № 001329502 от 26.05.04г.


**Администрация Моргаушского района информирует о предстоящем предоставлении ООО «Весна» в аренду земельного участка с кадастровым номером 21:17:160202:21, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, д. Шептаки, ул. Центральная, д 33а, для строительства и эксплуатации здания магазина, площадью 70 кв. м.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории:**

**- «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:0:898, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:121301, для сельскохозяйственного производства, площадью 48783 кв. м.;**

**- «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:121301:864, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:121301, для сельскохозяйственного производства, площадью 160546 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**


**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 4-5.**

**Ивановка ялĕнче йывăç пӳрт хуралтăсемпе сутатăп. Çĕрĕ 47 сотка. Тел.: 8-937-372-27-06.**

**Продаю плуг трехкорпусный для МТЗ, косилку КРР-2,1. Тел.: 8-961-340-55-68.**

**Проектирование домов. Тел.: 62-6-03, 8-903-345-75-76. 2-3.**

**Хĕрлĕ тĕслĕ июньте пăруламалли тынашки сутатпăр. Тел.: 8-927-865-06-11.**

**Продаю деревянный дом, земля 16 сот., с. Б. Сундырь. Тел.: 8-906-381-25-10.**

**Вăкăрсем, пăрусем, сурăхсем туянатпăр. Тел.: 8-903-063-07-57.**


**Хаçатăн çитес номерĕ эрне кун, апрелĕн 30-мĕшĕнче тухать.**


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
**Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.**
**ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, явапла секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1 пичет листи.**
**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**
**Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем явапла.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ Николаева Н.Н.**
**Пичете панă 27.04.2010 г.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 3980.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.